# Ҫĕнтерӳ ҫулĕ

1930 ҫулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

Вăрнар район хаҫачĕ

2011 ҫул раштав/декабрь/ уйăхĕн 21-мĕшĕ • юн кун • 152/10467/ № • Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru


# Леонид Николаев – район администрацийĕн пуҫлăхĕ

**Ĕнер депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 16-мĕш ларăвĕ иртрĕ. Унта Вăрнар район администрацийĕн пуҫлăхне ҫирĕплетрĕҫ. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх, ҫак должноҫа Леонид Григорьевич Николаев йышăнчĕ**

Леонид Григорьевич вăрнарсемшĕн ҫĕнĕ ҫын мар. Вăл районти пысăк предприятисен пуҫĕнче те, ытти яваплă должноҫсенче те тимленĕ. Юлашки вăхăтра – Чăваш Республикин ял хуҫалăх министрĕн заместителĕнче ĕҫленĕ.

Район пуҫлăхĕпе район администрацийĕн пуҫлăхĕ хушшинчи килĕшĕве алă пусиччен Леонид Григорьевич района малашне те экономикăпа социаллă пурнăҫ аталанăвĕн кăтартуллă ҫулĕпе илсе пыма, депутатсемпе, пуҫлăхсемпе, район халăхĕпе пĕрлешсе ĕҫлеме шантарчĕ.



Анатолий Кузьмин ăҫта кайĕ-ши, ыйтĕ чылайăшĕ. Района юлашки вун тăвата ҫул вăл ăнăҫлă ертсе пычĕ. Пуҫлăх пуканне шăпах ҫĕршыври финанс кризисĕн тапхăрĕнче йышăнчĕ пулин те, тăван района тĕпсĕр ҫырмана чăмтармарĕ. Ҫĕнĕ проектсемпе программăсене пурнăҫа кĕртни Вăрнара чылай кăтартупа республикăра тĕслĕхлисен речĕпех уттарчĕ. Ларăва хутшăннă май вăл ҫĕнĕ ертӳҫе ҫынсен ыйтăвне мала хума ыйтрĕ. «Халăх лайăх пурăнтăр тесен влаҫрисен тата тухăҫлăрах ĕҫлемелле», – терĕ вăл. Сăмах май, Анатолий Иванович ҫывăх вăхăтра Шупашкарта пысăкрах должноҫра ĕҫлеме тытăнĕ.

Ларăва район пуҫлăхĕ Александр Иванов ертсе пычĕ, унăн ĕҫне Чăваш Республикин ял хуҫалăх министрĕ Сергей Павлов та хутшăнчĕ.

*Леонид Григорьевич НИКОЛАЕВ 1958 ҫулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Кӳлхĕрри ялĕнче ҫуралнă. 1981 ҫулта Чăваш патшалăх ял хуҫалăх институтне пĕтернĕ, инженер-механик специальноҫне алла илнĕ.*

*Ĕҫ ҫулне хамăр районти Чапаев ячĕллĕ колхозра колхозникран пуҫланă.*

*1981 – 1984 ҫулсенче Вăрнар районĕнчи «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн машинăпа трактор паркĕн техника тивĕҫтерĕвĕн станцийĕн аслă инженер-технологĕнче, мастерской заведующийĕнче ĕҫленĕ.*

*1984 – 1988 ҫулсенче – ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ.*

*1988 ҫулта Вăрнар район агропромышленность комплексĕн председателĕн пурлăхпа техника тивĕҫтерĕвĕн заместительне ҫирĕплетнĕ.*

*1988–1992 ҫулсенче – ял хуҫалăхне механизацилес тата электрификацилес енĕпе ĕҫлекен хуҫалăх расчечĕпе ĕҫлекен патшалăх пĕрлешĕвĕн председателĕ – «Нива» АПК (Вăрнар пос.) генеральнăй директорĕн заместителĕ.*

*1992 – 1993 ҫулсенче – Вăрнар район администрацийĕн ял хуҫалăх управленийĕн пуҫлăхĕ.*

*1993 – 1996 ҫулсенче – Вăрнар район администрацийĕн пуҫлăхĕн заместителĕ, ял хуҫалăх тата апат-ҫимĕҫ управленийĕн пуҫлăхĕ.*

*1996 – 2006 ҫулсенче – ЧР «Чувашхлебопродукт» патшалăх унитарлă предприятийĕн «Вăрнарти тырă йышăнакан предприяти» филиалĕн директорĕ.*

*2006 – 2010 ҫулсенче – «Чувашавтодор» акционерсен уҫă обществин Вăрнарти ДРСУ директорĕ.*

*2010 – 2011 ҫулсенче – Чăваш Республикин ял хуҫалăх министрĕн заместителĕ.*

# Инвалидсене – социаллă пулăшу

**Раҫҫейре юлашки 10 ҫулта инвалидсене пурлăхпа тивĕҫтерессипе чылай ыйтăва татса панă. Инвалидсен пенсине палăртас тата социаллă тивĕҫтерӳсен пуххипе усă курас тĕлĕшпе ҫĕнĕлĕхсем пур-и? Страхлав тӳлевĕсене хывас тĕлĕшпе инвалидсем ҫăмăллăхсемпе усă курма пултараҫҫĕ-и? Ҫакăн ҫинчен Раҫҫей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Алексеевна КОНДРАТЬЕВА каласа парать.**

**ПИРĔН ИНТЕРВЬЮ**

*– Роза Алексеевна, республикăра Пенси фончĕ урлă миҫе инвалид тӳлевсем илет?*

– Раҫҫей Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ 90 пин ытла инвалида пенси тӳлет тата уйăхсерен укҫа тӳлевĕсем парать. Вĕсенчен 89 пин ытла ҫын пенсие Пенси фончĕ урлă илет, 1,6 пин ҫын – вăй ведомствисем урлă. Пенси ҫулне ҫитмен 18 пин гражданина инвалидноҫпа пенси тӳлетпĕр, 71 пин инвалида – ватлăх пенсине.

Уйăхсерен укҫа тӳлевĕсене тивĕҫекенсен йышĕнче пĕтĕмĕшле чирсемпе I–III ушкăн инваличĕсем – 90,9 % – (82,3 пин ҫын), инвалид-ачасем – 5,3% (4,8 пин ҫын), вăрҫă участникĕсемпе инваличĕсем – 3,8% (3,4 пин ҫын).

*– 2005 ҫулта ҫăмăллăхсене монетизацилесси пуҫланчĕ. Инвалидсене ку улшăну мĕн пачĕ?*

– 2005 ҫулта ҫăмăллăхсене монетизацилени гражданcене патшалăх пулăшăвне илме пĕр пек условисем туса пачĕ. Федераллă льготниксем валли уйăхсерен тӳлевсем ҫирĕплетнĕ тата ҫăмăллăхсем е укҫа суйлама право панă.

Кăҫал соцпакет тытăмне улăштарнă. Ăна виҫĕ пая пайланă – эмел (578 тенкĕ те 30 пус), санаторипе курорт (89 тенкĕ те 46 пус) тата транспорт (83 тенкĕ те 07 пус) пайĕсем. Унччен эмелсемпе путевкăсене пĕр медицина пайне пĕрлештернĕ пирки ку тивĕҫтерӳсенчен пĕрне илме хирĕҫлеме май пулман. Халĕ, сăмахран, эмелсене тӳлевсĕр илме, ҫав вăхăтрах путевка вырăнне укҫа илме пултаратăр.

2005 ҫулта федераллă льготниксене уйăхсерен тивĕҫекен тӳлевсем 3 хут енне ӳснĕ, 1638 тенкĕ те 18 пуспа танлашнă. Соцпакет хакĕ 1,7 хут пысăкланнă – 450 тенкĕрен 750-а ҫитнĕ. Кунсăр пуҫне федераллă льготниксем ҫурт-йĕршĕн тата коммуналлă тивĕҫтерӳсемшĕн тӳлеме социаллă хӳтĕлев органĕсем урлă ҫăмăллăхсем илеҫҫĕ. Ҫапла майпа вĕсен, ăҫта пурăннине тата сывлăх мĕнлине пăхмасăрах, патшалăх пулăшăвĕпе усă курма право пур.

*– Соцпакет илес темен инвалидсен ҫулсеренех заявлени ҫырмаллаччĕ, ҫакă вĕсемшĕн меллех марччĕ. Халĕ мĕн улшăнчĕ?*

– 2009 ҫултанпа соцпакетпа усă курмалли йĕркене ҫăмăллатнă. Халĕ ҫулсерен заявлени ҫырмалла мар. Пĕрре ҫырнă заявлени льготник хăйĕн шухăшне тепĕр майлă улăштаричченех чăн шутланать. Енчен те гражданин соцпакет илме хирĕҫ заявлени ҫырнăтăк, вĕсен тепĕр хут Пенси фондне килмесен те. Кăҫал ку ыйтупа 9,6 пин гражданин пынă, ҫав шутра – 8 пин енне инвалид. Тĕпрен илсен, инвалидноҫе пĕлтĕрхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа кăҫалхи сентябрĕн 30-мĕшĕччен илнисем. Пĕтĕмĕшле республикăра ҫăмăллăхсем вырăнне укҫа илме 78 пин инвалид ыйтса ҫырнă.

*– 2010 ҫултан пуҫласа инвалидноҫпе пенси тӳлес механизма улшăнусем кĕртнĕ. Ку ҫĕнĕлĕхпе паллаштарăр-ха?*

– Пĕрремĕшĕнчен, инвалидноҫ пенсине ҫирĕплетес йĕркене улăштарнă. Пенси виҫине инвалидноҫ ушкăнне кура шутлама пуҫланă. Иккĕмĕшĕнчен пенси вăхăтне ҫитнĕ, страхлав стажĕ 5 ҫултан кая мар инвалидсене ватлăх енĕпе ĕҫ пенсине заявленисĕрех ҫирĕплетеҫҫĕ. Гражданинăн ватлăхпа паракан ĕҫ пенсине тивĕҫме право ҫук-тăк, хĕрарăмсем – 60, арҫынсем 65 ҫула ҫитсен ватлăх социаллă пенсине параҫҫĕ. Ватлăхпа тивĕҫнĕ пенси виҫи инвалидноҫпе илекен пенси виҫинчен пĕчĕк пулмалла мар. III- мĕш ушкăн инвалидноҫне панă ҫар ҫыннисене, Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫин участникĕсене, блокадăри Ленинградра пурăннисене патшалăх пенсийĕпе тивĕҫтерессине те улшăнусем кĕртнĕ. Ачаран инвалидсене (медицина экспертизин органĕсем ҫирĕплетнĕ пулсан) пенсие 19 ҫул тултариччен тăршшĕпех тӳлессине те тивĕҫтернĕ.

*– Пенсионера пурăнма кирлĕ минимумран сахалрах тупăш илекен инвалидсене социаллă хушма тӳлев пама палăртнă. Ăна тивĕҫекен инвалидсем нумай-и?*

– Социаллă тӳлев виҫине ҫирĕплетме пенсионерăн пĕтĕм тупăшне, ҫав шутра пенсине, федераллă тата регионти уйăхсерен паракан тӳлевсене, коммуналлă тивĕҫтерӳсемшĕн илекен компенсацие те, шута илеҫҫĕ.

Кунсăр пуҫне, РФ Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн, Тăван

2 стр.

**Завтра – День энергетика**



*УВАЖАЕМЫЕ РАБОТНИКИ И ВЕТЕРАНЫ ЭНЕРГЕТИЧЕСКОГО КОМПЛЕКСА ЧУВАШИИ!*

*Поздравляю вас с профессиональным праздником!*

*День энергетика – это праздник тех, кто посвятил свою жизнь трудному, но очень важному делу – обеспечению людей теплом и светом. Работники отрасли успешно справляются с этой миссией, без сбоев доставляют в каждый дом, в социальные учреждения и всем потребителям-организациям народного хозяйства электроэнергию, способствуя, тем самым, динамичному развитию республики, движению только вперед.*

*Сегодня можно с уверенностью сказать, что продукция предприятий нашей республики успешно конкурирует с известными мировыми брендами. Чувашия стала центром электротехнической промышленности и релейной защиты во многом благодаря неустанной работе тысяч высококвалифицированных специалистов отрасли, которыми мы дорожим – в энергетическом комплексе республики трудятся известнейшие доктора наук, заслуженные изобретатели страны, рабочие и строители. Работа каждого – неоценимый вклад в общую копилку. Наши ветераны обучили не одно поколение молодых специалистов, достойно продолжающих их добрые начинания. Талантливые и перспективные, они призваны не только сохранить, но и укрепить наши лидирующие позиции.*

*Уверен, что и в дальнейшем вы будете обеспечивать устойчивую работу энергетического комплекса не только Чувашии, но и всей страны, делать жизнь людей теплее и светлее, примете деятельное участие в реализации государственной приоритетной политики по энергосбережению и повышению энергоэффективности.*

*Пусть этот праздник добавит Вам жизненной энергии, придаст оптимизма и подарит хорошее настроение. Желаю дальнейших успехов, крепкого здоровья, счастья и благополучия вам и вашим близким!*

*Президент Чувашской Республики М.ИГНАТЬЕВ.*

**Районти «Ҫĕнтерӳ ҫулĕ» хаҫата 2012 ҫулăн пĕрремĕш ҫурри валли ҫырăнтармалли тапхăр вĕҫленсе пырать. Хаҫат хакĕ: почта уйрăмĕсенче – 187 тенкĕ те 80 пус, редакцие килсе илмелле – 110 тенкĕ. Юратнă хаҫата ҫырăнма васкăр!**

## ҪАНТАЛĂК

| Кĕҫнерни кун | Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|---|
| 22.12 | 23.12 | 24.12 |
| -6 | -2 | -9 |
| -4 | -3 | -11 |

«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх

